# Çĕнтерӳ ялавĕ

Муркаш район хаçачĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчепе тухать

7 (7432) № ✻ Шăмат кун, 2007 çулхи январĕн (кăрлач) 27-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ


Паллă поэтăмăр юбилейне халалласа

## Эпир пулнă, пур, пулатпăр!

***Чăваш халăх поэчĕ Петĕр Хусанкай çуралнăранпа 100 çул çитнине халалласа январĕн 23-мĕшĕнче Шупашкарта Чăваш академи драма театрĕнче савăнăçлă каç иртрĕ. Уяв каçне уçнă май, ЧР культура министрĕ Петр Краснов чăваш халăх поэчĕ пирĕн пурнăçра епле пысăк вырăн йышăннине, унăн пĕтĕм кун-çулĕ çĕршыв шăпипе çыхăннине палăртрĕ. Асăннă уява ЧР Президенчĕ Нколай Федоров, ЧР Патшалăх Канашĕн председателĕ Михаил Михайловский, Раççей верентӳ академийĕн академикĕ, поэтăн çывăх тусĕ Геннадий Волков, Петĕр Хусанкайăн мăшăрĕ, СССР халăх артистки Вера Кузьмина, ывăлĕ, паллă ăсчах Атнер Хусанкай, поэтăн ентешĕсем – Тутарстан Республикин культура министрĕн çумĕ Айдар Гайнутдинов, Тутар халăх поэчĕ, ЧР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Ренат Харисов, Элкел район администрацийĕн пуçлăхĕ Фердинат Давлетшин, Чăваш халăх поэчĕ Порфирий Афанасьев тата ыттисем хутшăнчĕç.***

***Залра вара халăх лăк тулли. Паллă поэтăмăра сума сăвакансем пурте унăн юбилейне паллă тума пухăннă. Тухса калаçакансем ЧР Президенчĕ Николай Федоров тата ыттисем П.П. Хусанкай чăвашлăх аталанăвĕшĕн, тăван халăхшăн епле пысăк, нимĕнпе виçейми ĕç туса ирттернине палăртрĕç. Хăйĕн пĕтĕм пурнăçне вăл халăха халалланă.***





Чăваш сăмахлăхĕн аталанăвĕнче, литературинче нихçан манăçми тарăн йĕр, нихçан сӳнми çăлтăр çути хăварнисем сахал мар. Иван Яковлев, Константин Иванов, Николай Ашмарин, Çеçпĕл Мишши, Ухсай Яккăвĕ... Вĕсемпе пĕр ретрех тата Петĕр Хусанкай та. Ахальтен мар ĕнтĕ Чăваш Республикин Президенчĕ Николай Федоров ятарлă Хушу кăларса Чăваш Енре 2007 çула Хусанкай çулталăкĕ тесе палăртнă. Çавна май çулталăкĕпех юбилей мероприятийĕсем иртĕç.



Пирĕнтен кам пĕлмест пулĕ паян Петĕр Хусанкая, кам илтмен пулĕ унăн ятне. 2007 çулхи январĕн 22-мĕшĕнче вăл çуралнăранпа 100 çул çитрĕ. Вăл поэт кăна мар. Çав вăхăтрах тăлмачă та, чĕлхеçĕ те, публицист та, историк та, этнограф та, критик та, лирик та пулнă. Унăн хайлавĕсем 57 чĕлхепе янăраççĕ, унчченхи Совет Союзĕнчи 53 çыравçăн, чикĕ леш енчи 89 авторăн 500 ытла произведенине чăвашла е вырăсла куçарнă.

«Чăнах та, тĕнчери кашни халăхăн хăйĕн Пушкинĕ, кашни сăвăçăн вара тăван амăшĕ, Тăван çĕршывĕ, тăван чĕлхи, тăван халăх умĕнчи тивĕçĕ пур.

Малалла-ха пурнăç, малалла:

Эп пăртак чăваш ятне çĕклесшĕн.

Ман юман пек пулса кашламалла,

Хунавран эп тивĕç пиçĕхмешкĕн.

Малалла-ха пурнăç, малалла.

Анлă çул пуçламăшĕнче амăшне халалласа каланă çак сутă тĕллевсене чăваш халăхĕн мухтавлă юрăçи Петĕр Хусанкай чыслăн пурнăçласа пурăннă»,– терĕ хăйĕн сăмахĕнче республика Пезиденчĕ Николай Федоров.

Поэтăн пурнăç çулĕ тумхахсăр та пĕр тикĕс килмен. Ăна сăлтавсăр айăпласа тĕрмене хупни те пулнă, Аслă Отечественнăй вăрçă çулĕпе Сталинградран Польшăна çити утса тухнă, аманнă, апла пулин те çак йывăр самантсем мал туртăмлă поэтăн чунне хуçайман, чĕркуççи çине тăратайман. Малаллах ăнтăлнă вăл, йывăрлăхсене çĕнтерсе пынă. Чăваш Ене, тăван сăмаха, çынсене юратни Петĕр Хусанкая мĕн пур чăрмава сирме, çирĕплĕхе упраса хăварма тата суйласа илнĕ çултан пăрănмасăр малалла утма вăй парса тăнă.

Чăваш халăх поэчĕ Порфирий Афанасьев çамрăклăх çулĕсене, Петĕр Хусанкайпа пĕрле пулнă вăхăтсене аса илчĕ, тĕрлĕрен произведенисем чăвашларан тата ют чĕлхесенчен вырăсла, вырăсларан чăвашла куçарассипе çине тăрса ĕçленине палăртрĕ. «Ун чухлĕ куçару ĕçĕ пичетлесе кăларакан никам та пулман»,– терĕ вăл. Ку енĕпе унăн ĕçне тĕрлĕ халăхсем хушшинче хывнă кĕпер тесе хакламалла.

Вăл халăхăмăр, хыççăнхи ăру валли хăварнă несĕллĕх пуянлăхне мĕнпе виçме е танлаштарма пулать-ши? Пулмасть те пулĕ çав. Мĕншĕн тесен вăл пирĕншĕн, паянхи куншăн кăна мар. Вăхăт иртĕ, анчах та вăл тăван халăхшăн туса ирттернĕ ĕç пĕлтерĕшĕ тĕксĕмленĕ кăна мар, пачах урăхла, унăн пĕлтерĕшĕ, сумĕ татах çӳллĕрех пусăма çĕкленĕ, ячĕ вĕçĕмех тӳпери çутă çăлтăр пек ялкăшĕ. Çапла палăртрĕç паллă поэтăмăрăн, чăннипех те аслă çыннăн 100 çулхи юбилейне халалланă савăнăçлă каçа пухăннисем.

Чăваш халăх поэчĕн юбилейне халалласа ирттернĕ каç пысăк концертпа вĕçленчĕ, вăл пурин кăмăлне те кайрĕ. Унта аслă поэт сăввисемпе çырнă юрăсем чылай шăранчĕç.

**В. ШАПОШНИКОВ.**

**Сăн ӳкерчĕксенче: фойере П.П. Хусанкай хайлавĕсен тата ун пирки çырнă кĕнекесене туянма пулать; сĕтел хушшинче ЧР Президенчĕ Н.В. Федоров, поэт мăшăрĕ Вера Кузьмина тата ыттисем; концерт вăхăтĕнче.**

**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**

Ял тăрăхĕсен кунĕсенчен

## Ыйтусем хуравсенчен ытларах



**Малтан палăртнă пекех, Шетмĕпуç ял тăрăхĕн кунĕ январĕн 25-мĕшĕнче иртрĕ. Малтанах район администрацийĕн, федераллă службăсен районти уйрăмĕсен ответлă ĕçченĕсем Мичурин яч. хис. хуçалăхăн, Шетмĕпуç ял тăрăхĕн территорийĕнчи экономика объекчĕсенче, вĕрентӳ, культура, сывлăха сыхлас ĕç учрежденийĕсенче, йĕркеллĕ мар çемьесенче пулса курчĕç, вырăнсенчи лару-тăрупа паллашрĕç, Шетмĕпуçĕнчи тĕслĕх библиотекăра çынсене хăйсене интереслентерекен ыйтусемпе йышăнчĕç. Хыççăн вара ял тăрăхĕн кунне хутшăнакансем ял çыннисемпе тĕл пулса калаçма, ял тăрăхĕн кунĕн итогĕсене пĕтĕмлетме Шетмĕпуçĕнчи Культура çуртне пухăнчĕç.**

**(Вĕçĕ 5-мĕш стр.).**

**Эсир сăн ӳкерчĕкре куракан Валентина Владимировна Никитина Шетмĕпуçĕнчи тĕслĕх библиотекăра 30 çула яхăн ĕçлет. Хăйĕн ĕçне тивĕçлипе пурнăçласа пырать вăл. Упăшкипе иккĕшĕ кунти Культура çурчĕн ĕçне-хĕлне те йĕркелесе пыраççĕ.**

Республикăра

*Чăваш Республикин Президенчĕн Указĕ*

## Ачана уйăхсерен тӳлекен пособи виçине, çавăн пекех ачана усрава илнĕ ашшĕ-амăшĕн ĕçĕшĕн тӳлекен виçене ӳстересси çинчен

Ачаллă граждансене патшалăх пулăшăвĕ парассине вăйлатас тĕллевпе, Раççей Федерацийĕн Правительствин «2007 çулта Раççей Федерацийĕн субъекчĕсен бюджечĕсене опекунсен «попечительсен» çемйисенче тата усрава илнĕ çемьесенче ачасене тытса тăма, çавăн пекех ачана усрава илнĕ ашшĕ-амăшĕн ĕçĕшĕн тӳлеме субсиди памалли йĕрке çинчен» 2006 çулхи раштав уйăхĕн 30-мĕшĕнчи 842 №-лĕ йышăнăвĕпе килĕшӳллĕн **çапла йышăнатăп:**

1. 2007 çулхи кăрлач уйăхĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа: опекунсемпе «попечительсене», ачана усрава илнĕ ашшĕ-амăшне пĕр ачашăн уйăхсерен тӳлекен пособи виçине çакăн пек çирĕплетес:

2 çула çитиччен - 4000 тенкĕ,

2 çултан пуçласа 7 çула çитиччен - 4160 тенкĕ,

7 çултан пуçласа 18 çула çитиччен - 4570 тенкĕ;

усрава илнĕ çемьери 1-2 ачана воспитани панăшăн ашшĕ-амăшĕнчен пĕрин ĕç тӳлевĕн виçине - 2500 тенкĕпе, 3 тата ытларах ачашăн - 3600 тенкĕпе палăртас.

2. Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн çак Указри положенисене шута илсе, Чăваш Республикин саккунĕсен хăш-пĕр актне улшăнусем кĕртесси çинчен калакан Чăваш Республикин саккун проектне хатĕрлемелле, ăна Чăваш Республикин Патшалăх Канашне ярса пама Чăваш Республикин Президентне тăратмалла.

3. Çак Указ ăна официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кунран пуçласа вăя кĕрет.

**Чăваш Республикин Президенчĕ Н. ФЕДОРОВ.**

Шупашкар, 2007, кăрлач, 24, 5 №.

**(Указа ăнлантарса пани 6-мĕш стр. пичетленет).**

## Президент çырăвĕ

Январĕн 25-мĕшĕнче Шупашкарта, Правительство çурчĕн Пысăк залĕнче, Чăваш Республикин тăваттăмĕш суйлаври Патшалăх Канашĕн сессийĕ иртнĕ. Унăн ĕçне Раççей Федерацийĕн Федераци Пухăвĕн Федераци Канашĕн членĕ В.И. Слуцкер, Раççей Федерацийĕн Патшалăх Думин депутачĕсем П.В. Семеновпа А.Ю. Броницын, Федерацин Чăваш Енри тĕп инспекторĕ Р.К. Тихонов, Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн Председателĕ С.А. Гапликов, Министрсен Кабинечĕн членĕсем, патшалăх комитечĕсен, федераци ведомствисен территори органĕсен ертӳçисем, Президент канашçисем, район-хула, ял-хула тăрăхĕсен пуçлăхĕсем, промышленноç организацийĕсене, энергетикăпа çыхăну комплексĕсене, строительство, транспорт, çул-йĕр, пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх, ял хуçалăх, тирпейлекен предприятисемпе организацисене ертсе пыракансем, сывлăх сыхлавĕн организацийĕсен представителĕсем, банксемпе инвестици тата страхлакан компанисен, суту-илӳ предприятийĕсен ертӳçисем, предпринимательсем, вĕренӳ заведенийĕсен, наука организацийĕсен, политика партийĕсен, тĕн пĕрлешĕвĕсен, массăллă информаци хатĕрĕсен представителĕсем хутшăннă.

Çавăн пекех сесси ĕçне Пĕтĕм Раççейри «Регионти телекурав» конкурса йĕркелекенсем тата жюри членĕсем Владимир Познерпа Светлана Сорокина хутшăннă.

Сессире Чăваш Республикин Президенчĕ Патшалăх Канашне çуллен яракан Çырупа Чăваш Республикин Президенчĕ Н.В. Федоров тухса калаçнă.

Пултарулăхпа палăрнăшăн

## Хисеплĕ ят панӑ

Раççей Федерацийĕн Президенчĕн 2007 çулхи кăрлачăн 18-мĕшĕнчи Указĕпе килĕшӳллĕн суту-илӳри тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн тата нумай çул тӳрĕ кăмăлпа вăй хунăшăн Мăн Сĕнтĕрти потребительсен обществин канашĕн председательне **Людмила Петровна МАЙКОВАНА** «Раççей Федерацийĕн суту-илĕвĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ» хисеплĕ ят панă.

Юбилей

## Саламлатпăр



Мăн Хураçкари Ишмула ялĕнче пурăнакан юратнă мăшăра, аннене, хунямана, кукамая, мамака – **Анна Егоровна ТУРТЫШКИНАНА** 70 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн ăшшăн саламлатпăр. Ĕмĕтленнĕ ĕмĕтӳсем пурнăçа кĕрсех пыччăр, тĕллевӳсем те пурнăçланччăр. Сывлăхпа телей, ăнăçу, çывăх тăванусен юратăвĕ, мăнукусемпе кĕçĕн мăнукусен хаваслă кулли санӑн пурнăç çулне вăй парсах тăччăр. Ачăрсемпе мăнукăрсен телейĕ саншăн чи пысăк парне пултăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, хĕрĕ, ывăлĕсем, кĕрӳшĕ, кинĕсем, мăнукĕсем, кĕçĕн мăнукĕсем, тăванĕсемпе кӳршисем.**